Блиц-ыйтăм

Раççей кунĕ – пысăк уяв

Вăхăт хăвăрт иртет. 1990 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн патшалăх суверенитечĕ çинчен Декларацие йышăнни вăхăт иртнĕçемĕн хăйĕн пĕлтерĕшне ӳстерсех пырать, халăхăмăр чĕринче Раççее юратасси вăй илет, вăл унпа мухтанать, хăйĕн хӳтлĕхĕ вырăнне хурать. Раççей халăхĕшĕн çак паллă кунранпа 18 çул хыçа юлчĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 1994 çулхи Указĕпе çак куна Раççей кунĕ тесе уявлама йышăннă. Акă умра каллех çак кун. Мĕнле кĕтсе илетпĕр-ха эпир ăна? Çак ыйтусем çине хурав шыраса районăмăр çыннисемпе тĕл пултăмăр.

Н. С. ГОРШКОВ, Оринин каччи, контракт йĕркипе Раççей чиккинче хуралта тăрать, прапорщик:

– Монголи чиккине хурала тухатпăр та çурăм хыçĕнче Тăван çĕршыв – Раççей Федерацийĕ – пулнине самантлăха та асран кăлармастпăр. Чикĕ пăсакансене тытнă чух та Раççей хăрушсăрлăхĕ малти вырăнта. Унта-çке пирĕн атте-аннесем, шăллăм-йăмăксем. Вĕсем лăпкă çывăрччăр тесе куллен сивви-ăшшине пăхмасăр чикĕ хураллатпăр. Раççей – пирĕн çĕршыв. Апла пулсан Раççей кунĕ те пĕтĕм çĕршыв уявĕ. Савăнмалла пирĕн çак кун пурришĕн. Çамрăксем вара ирĕклĕ Раççее сыхласси çине алă сулмасса шанатăп.

И. Н. СМИРНОВ, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ:

– Раççей кунĕ хăйне юратакан кашни çыншăн уяв. Раççей – пирĕн çурт. Эпĕ хам ĕçĕмпе федераллă инспектор пулнăран Раççейри йĕркелĕх хамăртан килнине те ăнланатăп. Çавăнпа Раççей шанса панă участокра пушар хăрушсăрлăхне тивĕçлĕ шайра тытассине тĕп тĕллев тесе йышăнатăп. Кăçал паянччен районта 9 пушар пулчĕ тата вут-çулăмра пĕр çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ пулсан, çулталăк каялла ку кăтарту хăрушăрахчĕ: 17 пушар тата 6 çын вут-çулăм тыткăнĕнче пурнăçран уйрăлни. Çапах ĕçлемелли сахал мар-ха.

Ю. И. ПЕТРОВ, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă общество директорĕн çумĕ:

– Камăн мĕнле пулĕ те, анчах маншăн Раççей кунĕ уйрăмах пысăк уяв. Эпир паян хамăр çемьерен 10-ăн, иккĕмĕш сыпăкри шăллăмйăмăксем 36-ăн Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пурăнатпăр. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине Польша чиккинче пĕрремĕш сехетрех кĕрсе ăна çĕнтерӳпе вĕçленĕ атте те нумаях пулмасть 88 çул тултарчĕ. Вăл пире яланах Тăван çĕршыва юратма вĕрентнĕ, унăн экономикине аталантарассишĕн вăй хума хăнăхтарнă. Унăн сăмахĕсем самантлăха та ăшран тухмаççĕ. Акă çу уйăхĕнче кăна пирĕн завод хăйне уçнăранпа туман ӳсĕм тӳпине çитрĕ: эпир пĕрремĕш хут япăх кирпĕчсене шутламасăр уйăхра пĕр миллион та 469 пин штук кирпĕч туса кăлартăмăр. 175 çынран тăракан коллектившăн ку пысăк ӳсĕм. Çавăнпа та Раççей кунĕ ячĕпе пурне те саламлатăп, татах та тухăçлăрах ĕçлеме ырлăх-сывлăх сунатăп.

А. БЕЛОВ калаçнă.

Шкул пурнăçĕ

Чи лайăх вĕренекен

Оринин шкулĕнче пуçласа «Чи лайăх вĕренекен» конкурс ирттерчĕç. Ăна попечительсен канашĕн ертӳçи В.И. Вязов йĕркелерĕ.

Çак ята тивĕçессишĕн шкулти пур ача та тăрăшрĕ. Вĕсем шкулта, районта, республикăра ирттернĕ тĕрлĕ конкурссене, ăмăртусене хутшăнчĕç.

Чи пултарулли те хастарри 8-мĕш класра вĕренекен Алена Алексеева пулчĕ. Вăл кĕçĕн классенченех «5» паллăсемпе кăна вĕренет, пур предмета та килĕштерет. Çапах та история, биологие, чĕлхене тата литературăна ытларах кăмăллать.

Алена вĕренӳре тарăн пĕлӳ илме тăрăшнисĕр пуçне тĕрлĕ кружоксене кайма вăхăт тупать. Вăл волейбол, баскетбол секцийĕсене, тăван ен тата ӳнерçĕсен кружокĕсене çӳреме ӳркенсе тăмасть.

Шкул пурнăçĕнче чăннипех хастар хĕр ача. Хальхи вăхăтра Алена - шкул вице-президенчĕ тата 8-мĕш класс мэрĕ. Вăл шкул тата район чысне хӳтĕлесе тĕрлĕ мероприятисене хутшăнать. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çакăн пек çитĕнӳсем турĕ:

-шкулти 7 олимпиадăра çĕнтерчĕ,

-районти «Музей тата ачасем» конкурсра – 1 вырăн,

-районти «Зарница» ăмăртăвĕнче «Сила и ловкость» номинацире – 1 вырăн, «Боевой листок» номинацире – 1 вырăн.

-республикăри биологи конкурсĕнче вăл ертсе пынă команда – 2 вырăн,

-И.Я. Яковлева халалласа ирттернĕ республика олимпиадинче – 2 вырăн,

-республикăри ăслăлăх конференцийĕнче – 2 вырăн,

«Кенгуру» вăйăра районта – 1 вырăн, регионта – 4 вырăн,

- «Русский медвежонок» конкурсра районта – 2 вырăн, регионта – 8-10 вырăнсем,

-«Чĕвĕлти чĕкеç» вăйăра Пĕтĕм Раççей шайĕнче – 1 вырăн.

Чăнах та, пирĕн Алена пур çĕре те ĕлкĕрет. Вăл ертсе пыракан 8-мĕш классем шкулта чи пултаруллисем, маттурсем шутланса тăраççĕ. Алена тантăшĕсене пĕтĕçтерсе, хавхалантарса тăма пĕлет.

Çуллахи вăхăтра та унăн канăç çук. Вăл Оринин ялĕнчи ачасен пулăшу тата кану ушкăнне ертсе пырать. Вĕсем ватăсене пулăшма, яла тирпей-илем кĕртме манмаççĕ. Çав хушăрах концертсемпе ял халăхне савăнтараççĕ.

Çаксене пурне те шута илсе кăçалхи вĕренӳ çулĕн вĕçĕнче ăна попечительсен канашĕ «Чи лайăх вĕренекен» ят пачĕ, хаклă парнепе тата грамотăпа чысларĕ. Алена ӳсĕмĕсемшĕн тантăшĕсем те, учительсем те, ашшĕ-амăшĕ те савăнаççĕ. Вăл малашне те çакăн пекех тăрăшуллă та пултаруллă пуласса çирĕп шанса тăраççĕ.

Т. АЛЕКСЕЕВА, директор çумĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: Алена Алексеева.

Пирĕн пата çыраççĕ

Шкулти лагерьте

Çуллахи вăхăта кашни ачах кĕтет. Уроксем тумалла мар. Мĕн чухлĕ выляс килет, çавăн чухлĕ выляма пултаратăн. Анчах манăн тантăшсем лагерьсене канма каясси пирки калаçрĕç. Манăн вара килтен аякка каяс килмест. Килтисем те пурте ĕçлĕ. Аттепе анне ĕçре. Катя аппа 9-мĕш класс пĕтернĕ хыççăн экзаменсем тытать. Аня аппа шкулта аслăрах классенче вĕренекенсене валли йĕркеленĕ «Надежда» экологи лагерьне çӳрет. Шăллăм ача садне чупать. Пĕррехинче анне шкулта ман çулхисене валли те (эпĕ 3-мĕш класс пĕтертĕм) лагерь уçăласси пирки пĕлтерчĕ. Мана ку хыпар питĕ савăнтарчĕ.

Халĕ эпĕ кашни ирех кану лагерьне васкатăп. Кунта мана çак шкулта пĕрле вĕренекен ачасем кĕтеççĕ. Эпир хамăрăн воспитательсем ертсе пынипе вăхăта питĕ интереслĕ ирттеретпĕр. Э.С. Шишкина, Н.Н. Яковлева тата С.Н. Мешкова воспитательсем тĕрлĕ ăмăртусене, вăйăсене хутшăнтараççĕ. Паллах, эпир выляса кăна вăхăта ирттерместпĕр. Çуллахи вăхăтра шкул ытти чухнехи пекех таса пултăр тесе те тăрăшатпăр.

Ачасем кунта хаваспах килеççĕ, мĕншĕн тесен пире кунта Р.П. Баранова повар питĕ тутлă апат пĕçерсе çитерет.

Киле кайма вăхăт çитсен те ачасем саланма васкамаççĕ. Лагерь каникул тăршшĕпех ĕçлесен те ачасене вăл йăлăхтармасть пулĕ тетĕп.

Л. ЯКОВЛЕВА.

Сыпай шкулĕ.

Кашни кун пушар хыççăнхи пек

Эпир, Шатракасси ялĕнче пурăнакансем, иккĕмĕш çул ĕнтĕ кашни кун пушар пулнă пек пурăнатпăр.Виçĕмçул пирĕн ялта пысăк хуйхă пулнăччĕ. Тăватă çамрăк пушарта çунса кайрĕ. Вĕсенчен пĕри тăлăх ача пулнă. Пушарĕ шăпах ун килĕнче тухнăччĕ. Çак качăна пытарнă чухне те тĕрлĕ пăтăрмахсем пулчĕç. Ялти çынсем ăна пытарма тесе укçа пуçтарчĕç. Укçине депутата панăччĕ. Вăл укçаран (2950 тенкĕ) 550 тенкине çеç тĕллевлĕ усă курчĕç. Ытти укçине вара шывшăн пуçтарнă иккен эпир. Çамрăк каччăна тумтирĕ, пушмакĕ тата ытти япаласем те кирлĕ вĕт юлашки çула ăсатнă чух, кăна вара пĕтĕмпех пускилсем саплаштарчĕç. Апатçимĕçне те.

Пушар хыççăн пӳрт мĕнле (тискер) юлнă, паянхи кун та çаплах ларать. Депутатсемпе те каласнă, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе те пĕрре мар сăмах тапратнă пӳрт вырăнне тирпейлес пирки. Усси паянхи кун та çук. Ял варринче çакăн пек «илем» пулни çынна савăнтарать тенине ку таранччен илтмен-ха. Хаçатра чуна уçнă хыççăн та лав вырăнтан тапранмастьши?

Çунса кайнă каччăн кӳршисем.

Патшалăх пулăшвĕ

Амăшĕн укçи

РФ Президенчĕ ачаллă çемьесене пособи тӳлемелли йĕркене улăштарнă саккуна алă пуснă. РФ Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Çемьен, амăшлăхăн тата ачалăхăн медицинăпа социаллă ыйтăвĕсен департаменчĕн директорĕ Марина Гордееван пособи тӳлессипе çыхăннă хуравĕпе вулакансене паллаштаратпăр.

– Çĕнĕ суммăна мĕнле шутласа параççĕ?

– Çирĕплетнĕ суммăллă тӳлевсене индексацилеççĕ. Тĕслĕхрен, саккунра çакна палăртнă: ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхакан хĕрарăм шалăвăн 40 процентне тивĕçет - кун пек чух индексацилемеççĕ, мĕншĕн тесен суммăна шалăва тĕпе хурса шутласçĕ. Ĕçлемен амăшне, пĕрремĕш ачишĕн халĕ 1500 тенкĕ, иккĕмĕшĕшĕн тата ыттисемшĕн 3-шер пин илекенскере, кăçалтан ытларах тӳлеме тытăнаççĕ – суммăна индексацилеççĕ. Чăн та, ӳсĕм пысăках мар, анчах пирĕншĕн тӳлеве хăпартнинчен ытларах укçа тавар туянма пултараслăхне, инфляцие пăхмасăр, упраса хăварасси пĕлтерĕшлĕ пулчĕ. Тӳлеве ӳстерес тĕллеве вара пăрахăçламан-ха.

Халĕ центр тӳлевĕн чи пĕчĕк шайне пурнăçа кĕртет, федераци субъекчĕсем вара мелĕсене кура вĕсене хăйсен шучĕпе ӳстереççĕ.

Пособи	Сумма	Мĕнле документ кирлĕ тата ăçта памалла?
Ачана 1,5 çула çитиччен пăхнăшăн уйăхсерен тӳлекен пособи.	Ĕçлекен хĕрарăмсене пĕрремĕш ачашăн ĕç укçин 40 проценчĕ чухлĕ, анчах 1627,5 тенкĕрен кая, 6510 тенкĕрен мала мар, 3255 тенкĕ (6510 тенкĕрен мала мар) – иккĕмĕш ачашăн. Ĕçлемен амăшĕсене – 1627,5 тата 3255 тенкĕ.	Ĕçленĕ вырăна ача çурални çинчен свидетельство копине, ытти ачан çурални çинчен панă копине, заявлени, ашшĕ-амăшĕнчен тепри ача пособийĕ илменнине çирĕплетсе ĕçленĕ вырăнтан панă справка çитермелле. Ĕçлемен амăшĕсен документсене социаллă хӳтлĕхĕн хăйсем пурăнакан вырăнти органне памалла.
Ача çуралсан пĕр хут паракан пособи.	8680 тенкĕ.	Ача çурални çинчен ЗАГС панă справка, ĕçленĕ (вĕреннĕ) вырăнтан пособи тӳлеменнине çирĕплетекен справка, юлашки ĕç вырăнĕ пирки ĕç кĕнекинчен çырса илни (выписка). Ĕçлекен амăшĕсен – документсене ĕçленĕ вырăна, ĕçлеменнисен социаллă хӳтлĕх органне памалла.
Çие юлсан 12 эрнеччен медицина учрежденийĕнче шута илнĕ хĕрарăмсене пĕр хут паракан пособи.	325,5 тенкĕ.	Хĕрарăм консультацийĕ (медицина учрежденийĕ) панă справкăна – ĕçлекен вырăна.
Ача çуратас умĕнхи тата çуратнă хыççăнхи пособи (çие юлнăранпа вăтамран 30 эрне хыççăн).	Ĕç килĕшĕвĕпе ĕçлекенсене – вăтам шалăвăн 100 проценчĕ чухлĕ, анчах уйăхра 23400 тенкĕрен мала мар. Предприятие пĕтернипе ĕçрен кăларнисене – уйăхра 325,5 тенкĕ.	Ĕçлеме пултарайманнин листокне – ĕç вырăнне; предприятие пĕлтернипе ĕçрен кăларнисен – ĕçлеме пултарайманнин листокне социаллă хӳтлĕхĕн хăйсем пурăнакан вырăнти органне.

Редакци почтинчен

Хăçан хамăра хисеплеме вĕренетпĕр?

«Çынна çын – кашкăр» девизпа пурăнма пуçларăмăр тейĕн. Мĕнле те пулсан çынран лайăхрах пурăнас, кӳршĕрен маларах ĕлкĕрес тесе этем сăнĕнчен тухсах пыратпăр пек туйăнать. «Конкурентоспособнăй» çынна мухтама тăрăшатпăр. «Пурăнма пĕлекенсене ăмсанатпăр. Сисмесĕрех ĕлĕк ыр çын шутланнă çынсемех ячĕсене яраççĕ.

Сăмах учительсем хăйсене тĕрлĕ ăмăртусенче, конкурссенче, олимпиадăсемпе ЕҐЭсенче мĕнле тытни çинчен пырать.

Хăть те мĕн калăр та, юлашки çулсенче учительсемпе вĕсен вĕренекенĕсем хушшинче ирттерекен ăмăртуллă мероприятисенче тĕрĕсмарлăх çиеле тухса пырать. Ăмăртусемпе смотрсенче подставкăсем яланах тĕл пулаççĕ. Кашни ăмăртура тенĕ пекех. Тренерсемпе физкультура учителĕсем пĕлмесĕрех пулмасть вĕт-ха вăл. Шкул директорĕсем списокĕсене алă пуссах çирĕплетеççĕ вĕт-ха. Ачасене мĕнле тĕслĕх кăтартатпăрши? Кунта хуравĕ кирлĕ те мар.

Тĕрлĕ конкурссенче çĕнтерес тесе ачасем вырăнне хамăрах тĕпчев ĕçĕсем çыратпăр. Ачасем ячĕпе яратпăр та вĕсем çĕнтернĕ пек пулса тухать. Капла юрать-и? Кунта та хуравĕ кирлĕ мар.

Тĕрлĕ шайра тĕрлĕрен олимпиадăсем ирттереççĕ. Олимпиадăсенчен усси çук тесе каламастпăр. Ачасем тăрăшсах вĕренеççĕ, библиотекăсенчен тухма пĕлмеççĕ, Интернетра шыраççĕ. Ку питĕ аван. Япăххи – олимпиадăсенче пур мелсемпе те çĕнтерес тесе çӳрекен учительсен поведенийĕ. Хăйсен ачисем çĕнтерччĕр тесе отвечĕсене тупса параççĕ. Мĕн чуль таса чунлă ача тарăхса тухман пуль çакăн пек олимпиадăсенчен? Мĕн чухлĕ кӳренӳ çуралмасть пуль?

Акă, тĕслĕхрен, кăçал ирттернĕ олимпиадăсенчи пĕр ӳкерчĕк. Историпе районта ирттернĕ олимпиадăра ултă ачан (улттă!) ыйтусен хуравĕсем малтанах пулнă. Комиссинче ларакансем тем пек хытă тĕрĕслесен те ултавçăсене тытма майĕ пулман. Ара ачасем тĕрĕс хуравĕсене малтанах пăхмасăр вĕренсе пынă та-ха. Кун пек олимпиадăсене йĕркеллĕ ачасем хутшăнасшăн мар. Кам çĕнтересси малтанах паллă. Хыçала юлса намăс курас килмест вĕт-ха. Çавăнпа олимпиадăсене ирттермелли йĕркесене улăштармалла. «Утечка информации» тени ан пултăр.

Юрать тейĕпĕр. Ăмăрту, конкурсĕ, олимпиади-качки. Вĕсенче çĕнтерейменнипе тĕнче йăтăнса анмĕ. Анчах халĕ тепĕр амак сиксе тухрĕ. Ячĕ унăн – ЕҐЭ. Паллах, пурин те пысăк баллсем илсе аслă шкулсене тӳлевсĕр вĕренме кĕрес килет. Çулталăкне 32 пин тенкĕ тӳлесе вĕренме пур ача та пултаймасть. Çавăнпа та вĕренес шухăшлă ачасем шкулта чунне парса вĕренеççĕ.

Анчах... ЕҐЭ тытма килсен....

Илтсе-ха хăш-пĕр ачасем ЕҐЭре 100 балл пухни çинчен. Эпĕ çирĕм çул учительте ĕçлетĕп. Çак ЕҐЭ тесчĕсене халиччен хам ăспа 100 баллăх хуравласа кураймарăм. Шкул ачисем хăйсем тĕллĕн 100 балл пухма пултарни, паллах, питĕ, питĕ аван...

Анчах каллех чуна ыраттаракан пулăм лăпкăн ларма чăрмантарать. Ку вăл ЕҐЭри «этем факторĕ». Шкулта ирттерекен экзамена ЕҐЭрен йĕркеллĕрех ирттеретпĕр тесе шутлатăн. Шкулта халиччен те заданисене ксерокопи туса такам учителĕсене шутлаттарман. Шкулти экзаменра халиччен те шпаргалкăпа, телефонсемпе усă куртарман.

Халĕ ирттерекен ЕҐЭре мĕн куратăн-ха?..

ЕҐЭ ирттеретпĕр пулсан – йĕрке пултăр! Çапла мар-и, коллегăсем?

О. ТАРАСОВ, Москакасси шкул учителĕ.